26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
МАРТ
19
ВЫРСАРНИКУН
56(6551) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени туса пырса, ӗнер, мартӑн 17-мӗшӗнче, НОВО-УКРАИНКА хулипе пысӑк чугун ҫул станцине тата ПОМОШНАЯ хулипе паха чугун ҫул узелне штурмласа туртса илнӗ. Ҫав хуласене нимӗҫсем хӑйсен оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пункчӗсем туса хунӑ пулнӑ.

НОВО-УКРАИНКӐПА ПОМОШНАЯ хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ЖАДОВ генерал-лейтенантпа ШУМИЛОВ генерал-полковникӑн ҫарӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн КАТКОВӐН тата БРИЖИНЕВ полковникӑн танкисчӗсем, артиллери генерал-майорӗн ПОЛУЭКТОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПЕТРОВӐН тата артиллери генерал-майорӗн ПОПОВИЧӐН артиллерисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве асӑнлӑха палӑртса хӑварас тесе, НОВО-УКРАИНКӐПА ПОМОШНАЯ хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене «НОВО-УКРАИНСКИ» ят пама тата орденсемпе наградӑлама ӑӑратас.

Паян, мартӑн 18-мӗшӗнче, 20 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, 124 тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, НОВО-УКРАИНКӐПА ПОМОШНАЯ хулисене туртса илнӗ УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, НОВО-УКРАИНКӐПА ПОМОШНАЯ хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан ҫапӑҫусенче вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 18-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем мартӑн 18-мӗшӗнче, икӗ кун хушши вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, ЖМЕРИНКА хулине тата чугун ҫулсен оперативно паха узелне туртса илнӗ.

ЖМЕРИНКӐШӐН ҫапӑҫнӑ чух МОСКАЛЕНКО генерал-полковникпа ГОЛУБОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем, БЕЛЯЕВ полковникӑн танкисчӗсем, артиллери генерал-майорӗн ЛИХАЧЕВӐН артиллерисчӗсем, авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН тата авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНӐН летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве асӑнлӑха палӑртса хӑварас тесе, ЖМЕРИНКА хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене «ЖМЕРИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама ӑӑратас.

Паян, мартӑн 18-мӗшӗнче, 21 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, 124 тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, ЖМЕРИНКА хулине туртса илнӗ УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, ЖМЕРИНКА хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан ҫапӑҫусенче вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене—вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 18-мӗшӗ.

Кӑҫалхи мартӑн 6-мӗшӗпе 16-мӗшӗ хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсем тӳснӗ ҫухатусем тата Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсем тытса илнӗ трофейӑсем

Украинӑри 3-мӗш фронт, Ӑрми генералӗ МАЛИНОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе, нимӗҫсен ИНГУЛЕЦ шывӗ ҫинчи оборонине татса ЮЖНЫЙ БУГ шывӗ ҫине тухнӑ хыҫҫӑн, урӑхла каласан, кӑҫалхи мартӑн 6-мӗшӗпе 16-мӗшӗ хушшинче, нимӗҫсен ХОЛИДТ генерал-полковникӗн 6-мӗш армине тӗрӗссипе пӗтӗмӗшпех ҫапса аркатнӑ. Тӑшмана тӗп поражени кӑҫалхи мартӑн 13-мӗшӗпе 16-мӗшӗ хушшинчи тапхӑрта тӳстернӗ. Ҫавӑн чухне, ПЛИЕВ генерал-лейтенантӑн гвардейски группи нимӗҫсен тылне кӗрсе кайсан, нимӗҫ командованийӗн хӑйӗн ҫарӗсене тытса пырасси пусӗпех пӗтсе ларнӑ та вара вӑл хӑйӗн салтакӗсене вак-тӗвек ушкӑнсемпе е пӗчченшерӗн те пулин хӗвеланӑҫнелле шӑвӑнса тухма приказ панӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн, пирӗн дивизисемпе корпуссем, тӑшманӑн чылай колоннисене ҫавӑра-ҫавӑра илсе, хӑвӑрттӑн та татӑклӑн пыра-пыра ҫапса, вӗсене пӗчченшерӗн пӗтере-пӗтере тӑкнӑ. Тӑшмана ҫав тери хӑвӑрттӑн та татӑклӑн пӗтерсе пынӑ пирки тӑшман хӑйӗн татӑла-татӑла юлнӑ ҫарӗсене пӗр ушкӑна та пухма пултарайман, ҫакӑ вара тӑшман ҫарӗсене пайӑн-пайӑн, пуринчен ытла, Ново-Севастополь, Ново-Сергеевка, Шевченко хуторӗ районӗнче тата Березнеговатое, Явкино, Снигиревка районӗнче пӗтерсе тӑкма май панӑ.

Тӑшмана пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкассишӗн пынӑ ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен ҫак дивизийӗсене пӗтӗмпех ҫапса аркатнӑ, пӗтерсе тӑкнӑ: 3-мӗш, 97-мӗш, горно-стрелковӑй дивизисене, 17-мӗш, 123-мӗш, 125-мӗш, 258-мӗш, 302-мӗш, 294-мӗш, 387-мӗш пехотнӑй дивизисене, 9-мӗш танковӑй дивизие; 9-мӗш, 15-мӗш, 46-мӗш, 62-мӗш, 79-мӗш, 304-мӗш, 306-мӗш, 335-мӗш пехотнӑй дивизисене, 23-мӗшпе 24-мӗш танковӑй дивизисене тата 16-мӗш мотодивизие йывӑр поражени тӳстернӗ, ҫавна пула тӑшманӑн ҫав соединенийӗсем текех ҫапӑҫма пултарайми пулса тӑнӑ; 76-мӗш, 111-мӗш, 257-мӗш, 370-мӗш пехотнӑй дивизисем пысӑк ҫухатусем тӳснӗ, ҫапах кӑшт та пулин ҫапӑҫмалӑх сыхланса юлнӑ.

Ҫак уйрӑм чӑҫсем хӑйсен мӗнпур ҫар хатӗрӗсене ҫухатнӑ: нимӗҫсен главнӑй командованийӗн резервӗнчи 45-мӗш, 51-мӗш, 53-мӗш, 115-мӗш, 127-мӗш, 140-мӗш артиллери полкӗсем, главнӑй командовани резервӗн 52-мӗш, 77-мӗш, 148-мӗш, 154-мӗш, 707-мӗш, 711-мӗш, 732-мӗш, 736-мӗш, 737-мӗш артдивизионсем, штурмовой орудисен 209-мӗш, 232-мӗш, 236-мӗш, 238-мӗш, 243-мӗш, 277-мӗш, 278-мӗш, 281-мӗш дивизионсем тата штурмовой орудисен 560-мӗш йывӑр дивизионӗ. Кунсӑр пуҫне, пехота вырӑнне ҫул ҫинчен тӳрех ҫапӑҫӑва кӗртсе янӑ сапернӑй, строительнӑй, штрафной, охраннӑй, жандармски тата маршевӑй батальонсене — пурӗ 25 уйрӑм батальона ҫапса аркатнӑ.

Ҫав вӑхӑт хушшинче 13.859 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ, пирӗн территори ҫинче 36.800 ҫын вилсе выртса юлнӑ.

ТЫТСА ИЛНӖ: танксем — 131, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен орудисем — 74, тупӑсем— 678, пулеметсем — 1.646, автомашинӑсем — 9.100 (ытларахӑшӗ юсавсӑр), тягачсем — 517, бронетранспортерсем — 115, лавсем—1.500, мотоциклсем — 605, рацисем—44, винтовкӑсем—30.750, автомашинӑсем—10.220, минометсем — 453, тӗрлӗ складсем — 99, боеприпас тиенӗ чугун ҫул эшелонӗсем—13, паровозсем — 27, мотовозсем — 5, снарядсем — 28.000, авиабомбӑсен склачӗсем — 2, шаршанласа хунӑ огнеприпассем—1800 вагонлӑх лашасем—2000 ытла тата юхан шывпа ҫӳрекен пӗр прахут.

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ хыҫҫӑн тӑшман пирӗн территори ҫине пӑрахса хӑварнӑ: танксем — 144, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен орудисем — 118, тупӑсем 540, минометсем — 559, пулеметсем — 1458, автомашинӑсем — 6931, тягачсем—67, бронетранспортерсем — 88, лавсем — 5724, лашасем—2.510, тӗрлӗ складсем—20, мотоциклсем—120, самолетсем—10, бронекатерсем — 5.

Ҫапла ӗнтӗ нимӗҫсен 6-мӗш армийӗ ҫар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсем тата ҫынсем тӗлӗшпе ҫакӑн чухлӗ ҫухатнӑ: вилнисемпе тыткӑна лекнисем—50.659 ҫын, ку шута тӑшман турттарса кайнӑ унӑн аманнӑ салтакӗсем кӗмеҫҫӗ, лашасем—4510, тупӑсем 1218, минометсем—1012, пулеметсем—3134, танксем—275, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен орудисем—192, бронетранспортерсем—203, автомашинӑсем—16.031 тата ытти тӗрлӗ техникӑпа ҫар материалӗсем нумай ҫухатнӑ.

Нимӗҫсен тарнӑ хӑшпӗр штабӗсем тата ҫапса аркатнӑ соединенийӗсен вак-тӗвек юлашкийӗсем кӑна ҫӑлӑнса юлнӑ.

Нимӗҫсен 6-мӗш армине ҫапса аркатас ӗҫре Украинӑри 3-мӗш фронта Верховный Главнокомандовани Ставкин уполномоченнӑйӗ Совет Союзӗн Маршалӗ ВАСИЛЕВСКИЙ ертсе пырса пулӑшу панӑ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗ

Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗн 1944 ҫулхи мартӑн 18-мӗшӗнчи ларӑвӗ ҫинчен

ИНФОРМАЦИЛЛӖ ПӖЛТЕРӲ

Ӗнер, мартӑн 18-мӗшӗнче, каҫхине 5 сехетре, Шупашкар хулинче, Советсен Ҫуртӗнчи ларусем пулакан залра Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗ уҫӑлчӗ.

Сессие Чӑваш АССР Верховный Совет Председателӗн Заместителӗ В. М. Немцев депутат уҫать.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗ пӗр сасӑпа пулса ҫак кун йӗркине ҫирӗплетет:

1. Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси тата Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942, 1943 ҫулсенчи бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен калакан отчетсене ҫирӗплетесси.

2. Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗсене, VI-мӗшӗпе VII-мӗш сессисем хушшинче йышӑннӑскерсене тата Чӑваш АССР Верховный Совечӗ ҫирӗплетме тивӗҫлӗскерсене, ҫирӗплетесси.

Сессин кун йӗркинчи пӗрремӗш ыйту тӑрӑх—Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне ҫирӗплетесси тата Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942, 1943 ҫулсенчи бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен калакан отчетсене ҫирӗплетесси ҫинчен—Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗ И. И. Золотников юлташ доклад туса пачӗ.

Ун хыҫҫӑн Чӑваш АССР Верховный Совечӗ Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗн председателӗн К. Д. Медянин депутатӑн содокладне итлерӗ.

Ҫакӑнпа Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VII-мӗш сессийӗн пӗрремӗш ларӑвӗ хупӑнчӗ.

Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджечӗ тата Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942, 1943 ҫулсенчи бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен

Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗ И. И. Золотников юлташ тунӑ доклаоран

I. Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942 тата 1943 ҫулсенчи бюджетне пурнӑҫланин итогӗсем

Депутат юлташсем! Эсир пӑхса тухса ҫирӗплетме Чӑваш АССР Совнаркомӗ Чӑваш Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республикин 1944 ҫулхи бюджетне тата Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942 тата 1943 ҫулсенчи бюджечӗсене мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен калакан отчетсене тӑратать.

Чӑваш республикин 1941 ҫулхи бюджечӗ, Чӑваш республикин Верховный Совечӗн V-мӗш сессийӗ ҫирӗплетнӗскер, доходсемпе расходсем енӗпе 165.622 пин тенкӗ чухлӗ пулнӑ. Ҫав бюджета доходсем енӗпе 147.826 пин тенкӗ чухлӗ, расходсем енӗпе 143.896 пин тенкӗ чухлӗ пурнӑҫланӑ. Доходсем расходсенчен 3.930 пин тенкӗ ытларах пулнӑ.

Совет халӑхӗ фашистла Германие хирӗҫ туса пыракан вӑрҫӑ 1941 ҫулхи бюджета пурнӑҫа кӗртес ӗҫе чылай улшӑнусем кӳчӗ. Анчах та, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи условисене пӑхмасӑрах, халӑх хуҫалӑхне 20.851,2 пин тенкӗ, урӑхла каласан, бюджет планӗн 62,4 процентне хывнӑ. Социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисене пурнӑҫа кӗртме 95.474,6 пин тенкӗ хывнӑ, ку бюджет планӗн 87,2 процентчӗ чухлӗ пулать. 1941 ҫулхи бюджетӑн доход пайӗсенче государство налогӗсенчен тата налогран мар пухнӑ укҫасем, оборотран илекен налогсенчен кӗнӗ укҫасем 108.904,5 пин тенкӗ чухлӗ пулнӑ. Уйрӑмӑн илсен, республикӑра сарнӑ государство заемӗсенчен кӗнӗ укҫасем 7.669,4 пин тенкӗ пулнӑ.

Чӑваш АССР-ӗн 1942 ҫулхи бюджетне вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи условисене шута илсе тунӑ. Унӑн хисепне 143.795 пин тенкӗ чухлӗ ҫирӗплетнӗ. Бюджетӑн доходӗсене 141.925,6 пин тенкӗ чухлӗ пурнӑҫа кӗртнӗ. Бюджетӑн расходӗсем 137.824,9 пин тенкӗ пулнӑ. Бюджетӑн доход пайӗнче государство налогӗсенчен тата оборотран кӗнӗ укҫасем 107.369,5 пин тенкӗ пулнӑ.

Республикӑра государствӑн пӗрремӗш военнӑй заемне ӑнӑҫлӑн сарнипе пула 1942 ҫулхи бюджета заемран кӗнӗ укҫасем 33.608,4 пин тенкӗ пулнӑ. Ку вӑл 1941 ҫулхи бюджета заемран кӗнӗ укҫа-тенкӗ хисепӗнчен 4,5 хут ытларах шутланать. 1941 ҫулта бюджета заемран 7.669,4 пин тенкӗ кӗнӗ пулнӑ. Оборотран налог пухмалли плана 16 миллион тенкӗ ирттерсе тултарнӑ.

Ҫакӑ вӑл 1942 ҫулта союзлӑ бюджета 19 миллион тенкӗ уйӑрса пама май пачӗ.

Чӑваш республикин 1943 ҫулхи бюджечӗ, Чӑваш АССР Совнаркомӗ палӑртнӑ тӑрӑх, доходсем енӗпе 151.674 пин тенкӗ чухлӗ тата расходсем енӗпе 148.454 пин тенкӗ чухлӗ пулнӑ.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VI-мӗш Сессийӗ, 1943 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче, бюджета 1943 ҫулхи 9 уйӑх хушшинче мӗнле пурнӑҫланине сӳтсе явса, Финанс Халӑх Комиссариачӗн тата ытти чылай Халӑх Комиссариачӗсемпе Управленисен, вырӑнти советсен ӗҫне хытӑ критиклерӗ, пӗтӗм финанс, бюджет тата налог ӗҫне татӑклӑнах лайӑхлатма хушса хӑварчӗ. Кунта бюджета ҫулталӑк хушшинче мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен тӗплӗн чарӑнса тӑма кирлӗ мар тесе шутлатӑп, ҫавӑнпа та пӗтӗмӗшлӗ итогсем ҫинчен, Чӑваш АССР Верховный Совечӗн иртнӗ сессийӗнче депутатсем бюджет ыйтӑвӗпе каланисене мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен калаҫа паратӑп.

Чӑваш АССР-ӗн бюджетне 9 уйӑх хушшинче доходсем енӗпе 70,4 процент, расходсем енӗпе 61,7 проц. пурнӑҫланине ҫителӗксӗр тесе палӑртнӑ. Мӗнле улшӑнусем пулнӑ-ха IV-мӗш кварталта, уйрӑмӑнах сесси пулса иртнӗ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра, бюджета пурнӑҫа кӗртес ӗҫре?

Пӗтӗмӗшпе илсен, ҫулталӑк хушшинче бюджета доходсем енӗпе 151.893,6 пин тенкӗ, урӑхла каласан, 100,1 процент чухлӗ, расходсем енӗпе 142.201,5 пин тенкӗ, урӑхла каласан 96,0 процент пурнӑҫланӑ.

Доходсем расходсенчен 15.692,6 пин тенкӗ чухлӗ ытларах пулнӑ. Союзлӑ бюджета 13 миллион тенкӗ панӑ. 1943 ҫулхи IV-мӗш кварталта бюджета доходсем кӗрес ӗҫре тӳрленӳ пулнӑ...

...ӗсем кӳрес тата бюджетпа пӑхнӑ укҫа-тенкӗпе усӑ курас ӗҫӗн хӑвӑртлӑхне ӳстернине куратпӑр. 1943 ҫулхи бюджет тӑрӑх халӑх хуҫалӑхне 11.516,0 пин тенкӗ, социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисене пурнӑҫа кӗртме 95.853,3 пин тенкӗ тата управлени расходӗсем валли 20.170,2 пин тенкӗ панӑ.

1943 ҫулхи бюджетӑн доход пайӗнче государство налогӗсенчен кӗнӗ укҫасем 94.557 пин тенкӗ, вӑл шутра оборотран илнӗ налог 34.263,0 пин тенкӗ пулнӑ. Государство заемӗсенчен кӗнӗ укҫасем 28.892,7 пин тенкӗ пулнӑ.

Государство промышленноҫӗ продукци кӑлармалли плана (Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗсӗр пуҫне), 1926—1927 ҫулсенчи хакпа шутласан, 101,2 процент тултарнӑ. Вӑл шутра: облаҫри промышленность 96,2 процент, районри промышленность 116,1 процент тултарнӑ.

1943 ҫулта продукци туса кӑларасси, 1942 ҫулхипе танлаштарсан, 13,2 процент, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, 35,6 процент ӳснӗ.

Вӑрман промышленноҫӗпе коммуналлӑ хуҫалӑх Халӑх Комиссариачӗсен, вырӑнти топливо промышленноҫӗпе строительство материалӗсем тӑвакан промышленность управленийӗсен предприятийӗсем 1943 ҫулта продукци туса кӑлармалли плана тултарса ҫитереймен.

Бюджет тӑрӑх расходлама палӑртнӑ укҫа-тенкӗрен халӑх хуҫалӑх енӗпе 3.859,2 пин тенкӗ, социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисем енӗпе 5,4 миллион тенкӗ усӑ курмасӑр юлнӑ. Ҫакӑ вӑл уйрӑм халӑх комиссариачӗсем тата исполкомсем ҫителӗксӗр ӗҫленӗ пирки пулнӑ.

1943 ҫулта халӑхран укҫа-тенкӗ пухмалли плана 44,5 миллион тенкӗ ирттерсе тултарнӑ.

Халӑхран укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе Хӗрлӗ Чутай, Пӑрачкав, Кувакино, Ҫӗмӗрле тата Шӑмӑршӑ районӗсем ҫителӗксӗр ӗҫленӗ.

Депутат юлташсем! Чӑваш АССР-ӗн бюджетне отчетлӑ ҫулсенче пурнӑҫланин итогӗсем бюджетӑн доход базисем ӳсни ҫинчен калаҫҫӗ. Ҫак ҫитӗнӗве, чи малтанах, республикӑри хуҫалӑх организацийӗсен ӗҫне лайӑхлатнипе тунӑ. Республикӑра иртнӗ виҫӗ ҫул хушшинче доходсем, государство страхованийӗн укҫисӗр пуҫне, 2 миллиард тенкӗ таран пухни те ҫавӑн ҫинчен калаҫа парать.

РСФСР-ӑн тата ССР Союзӗн государство бюджечӗсене, колхозниксемпе рабочисем тата интеллигенци Хӗрлӗ Ҫар валли танксем, самолетсем тума ирӗккӗн ланӑ укҫа-тенке шута илсен, пӗтӗмпе 1.581 миллион тенкӗ хывнӑ.

Ку ӗнтӗ пирӗн промышленность, ял хуҫалӑхӗ, колхоз хресченӗсемпе пӗтӗм халӑхӑн экономики ӳсӗ пыни ҫинчен, республикӑри ӗҫҫыннисен хастарлӑ ӗҫӗ ҫинчен тата вӗсем хамӑрӑн социализмлӑ тӑван ҫӗршыва, большевиксен партине, хамӑрӑн ҫулпуҫа аслӑ Сталина вӗҫӗмсӗр юратни ҫинчен каласа парать.

Ҫакӑн пек ӗнтӗ 1941, 1942 тата 1943 ҫулсенчи бюджета пурнӑҫлании кӗске итогӗсем.

II. Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджечӗ

РСФСР Верховный Совечӗн V-мӗш Сессийӗ Чӑваш АССР-ӗн бюджетне доходсем тата расходсем енӗпе 162.341 пин тенкӗ чухлӗ палӑртса пачӗ. Ку ӗнтӗ, 1943 ҫулхи бюджета пурнӑҫа кӗртнӗ хисеппе танлаштарсан, доходсем енӗпе 10.449 пин тенкӗ тата расходсем енӗпе 26.140 пин тенкӗ чухлӗ ӳсӗм пулнине пӗлтерет.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ, бюджетӑн доход пайне ӳстермелли майсене шыраса тупса, ӑна 163.328,3 пин тенке ҫити ӳстерме май пулать тесе шутлать.

Республика бюджечӗн доходӗсене укҫа-тенкӗ кӗресси тӗпрен илсен ҫакӑн пек хисеппе пулмалла:

(пин тенкӗпе шутласа)

Доходсем илмелли майсем	Миҫе тенкӗ
Пӗтӗм доходсем	163.328,3
вӑл шутран:	
а) республика ҫумне ҫирӗплетсе панӑ доходсем	80.691,1
ҫак хисепрен:	
Хуҫалӑх организацийӗсен тупӑшӗнчен илмелли укҫа	17.172,2
Предприятисемпе организацисенчен илмелли подоходнӑй налог	14.103,0
Вырӑнти налогсемпе тӳлевсем	18.171,2
б) Пӗтӗм союзлӑ доходсенчен илмелли укҫа	82.636,7
ҫак хисепрен:	
Оборотран илмелли налогран кӗрекен укҫа	31.735,0
Халӑхран илмелли налогсемпе тӳлевсенчен кӗрекен укҫа	25.107,2
Государство заемӗсенчен кӗрекен укҫа	26.382,8

Пирӗн республика бюджетне халӑхран илекен пӗтӗм союзри налогсенчен ҫакӑн чухлӗ укҫа уйӑрса параҫҫӗ: халӑхран илекен подоходнӑй налогран 10 процент, ялхуҫалӑх налогӗнчен 25 процент, военнӑй налогран 5 процент тата хамӑрӑн республикӑра саракан государство заемӗсен укҫинчен 15 процент параҫҫӗ.

ПРЕДПРИЯТИСЕМПЕ ОРГАНИЗАЦИСЕН ТУПӐШӖНЧЕН КӖРЕКЕН УКҪА-ТЕНКӖ

Промышленность ӳссе пынӑ май предприятисемпе организацисен тупӑшӗнчен бюджета кӗрекен укҫа-тенкӗ хисепӗ те ҫултан ҫулах ӳссе пырать. 1940 ҫулта тупӑшсенчен Чӑваш АССР бюджетне 7.600 пин тенкӗ, 1941 ҫулта 8.742 пин тенкӗ, 1942 ҫулта 13.279 пин тенкӗ, 1943 ҫулта 15.561 пин тенкӗ кӗнӗ. 1944 ҫулта тупӑшсенчен кӗрекен укҫа 17.172 пин тенкӗ пулмалла.

Бюджетӑн доход пайне ҫак енӗпе ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртес тесен, предприятисемпе хуҫалӑх организацийӗсен руководителӗсен производствӑпа финанс планӗсене вӑхӑтра тултарассишӗн кӗрешмелле. Предприятисем тикӗс ӗҫлесен, хӑйсем валли чӗртавар, ӗҫ вӑйӗ, транспорт вӑхӑтра тата кирлӗ чухлех тупса пырсан, укҫана тивӗҫлипе перекетлесе пырсан, брак тӑвассине хирӗҫ кӗрешсен, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырсан, вӗсем хӑйсен бюджет умӗнчи обязательствисене яланах ирттерсе тултарма пултараҫҫӗ.

Акӑ, сӑмахран, Автотранспорт Управленийӗн Канашри контори (начальникӗ Послов юлташ) 1943 ҫулта производство программине 169,7 процент тултарнӑ, грузсем турттарассин тонна-километр хакне 83,5 пуса ҫити чакарнӑ. Вӑл контора хӑйӗн тупӑшӗнчен бюджета 70 пин тенкӗ тата таварсемпе сутӑ тумасӑр илнӗ тупӑшсенчен тӳлекен налог 17,4 пин тенкӗ панӑ. Шупашкарти сӑра завочӗ (директорӗ Быков юлташ) ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернипе тата продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетнипе пула 39,5 пин тенкӗ перекетленӗ. Завод хӑйӗн бюджет умӗнчи обязательствисене чылаях ирттерсе тултарнӑ.

Анчах та пирӗн республикӑри нумай предприятисемпе организацисем накоплени тумалли плансене тултармаҫҫӗ. Вӑл предприятисен руководителӗсем перекетлӗх режимне пӑхӑнмаҫҫӗ, продукцин хӑйне ларакан хакне чакарассишӗн кӗрешмеҫҫӗ, ҫавна пула вара бюджет умӗнчи обязательствӑсене те пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ.

Акӑ сӑмахран, крахмалтреста илер. Вӑл 1943 ҫулта продукци туса кӑлармалли плана 79,8 процент ҫеҫ тултарнӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ планра кӑтартнине танлаштарсан, 74,4 процент кӑна пулнӑ. Ҫав вӑхӑтрах ӗҫ укҫи фондне 76,9 пин тенкӗ ытлашши расходланӑ, продукцин хӑйне ларакан хакне планпа палӑртнинчен 3,2 процент ӳстернӗ. Ҫапла вара 70,3 пин тенкӗ сиен курнӑ. Ҫакӑсене пула крахмалтрест накоплени тумалли плана 134 пин тенкӗ чухлӗ тултарман.

Пирӗн промышленноҫӑн продукци кӑларассине тата накоплени тӑвассине ӳстерме пысӑк майсем пур. Анчах та вӑл майсемпе пӗтӗмпех усӑ курмаҫҫӗ-ха. Шултӑра предприятисен отходӗсене пур ҫӗрте те шута илмеҫҫӗ тата вӗсемпе пур ҫӗрте те тивӗҫлипе усӑ курмаҫҫӗ.

Вырӑнсенче вырӑнти чӗртаварсенчен апат-ҫимӗҫсем туса кӑларасси ҫине тивӗҫлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ. Сӑмахран, Канаш, Комсомольски, Елчӗк, Чкаловски, Етӗрне тата Пӑрачкав районӗсенче ку таранах ҫитсе те апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем организацилемен.

Первомайски, Ишлей, Сӗнтӗр тата Октябрьски районсенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем те пит начар ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем продукци сахал туса кӑлараҫҫӗ. Октябрьскинчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗ ҫулталӑк хушшинче те 7 пин тенкӗлӗх кӑна продукци туса кӑларать. Ишлейри промкомбинатӑн продукци туса кӑлармалли ҫулталӑкри программи 12 пин тенкӗрен иртмест.

Вырӑнти органсем хӑйсем патӗнче вырӑнти чӗртаварсенчен апат-ҫимӗҫсем туса кӑларассине организацилеме тивӗҫлӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1941 ҫулхи январӗн 7-мӗшӗнче кӑларнӑ постановлени вырӑнти промышленноҫпа промкооперацие аталантарма питех те лайӑх условисем туса пачӗ.

Районри промышленность, вӑрҫӑ ҫулӗсенче хӑйне панӑ ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курса, продукци туса кӑларассине чылаях ӳстерчӗ.

Вырӑнти промышленность Халӑх Комиссариачӗн предприятийӗсем 1943 ҫулта 5.026 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларнӑ, ку вӑл, 1940 ҫулхи планпа танлаштарсан, 192 процент чухлӗ ӳсни пулать. 1944 ҫулта 6.200 пин тенкӗлӗх продукци кӑларма палӑртнӑ, вӑл шутра куллен кирлӗ япаласем 4.200 пин тенкӗлӗх пулмалла.

Апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн предприятийӗсем 1943 ҫулта 1.240 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларнӑ. вӗсен 1944 ҫулта 1.700 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑлармалла.

Промысла кооперацийӗ 1943 ҫулта 58.788,5 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларнӑ. 1944 ҫулта унӑн 61,8 миллион тенкӗлӗх продукци туса кӑлармалла.

Государствӑн облаҫа тата района пӑхӑнса тӑракан вырӑнти промышленноҫӗн, вӑрман промышленноҫӗн тата кооперации промышленноҫӗн 1944 ҫулта пӗтӗмпе 100 миллион тенкӗлӗх продукци туса кӑлармалла. Вӑл шутра куллен кирлӗ таварсем 57,1 миллион тенкӗлӗх пулмалла.

Промышленность тата промысла кооперацийӗ 1944 ҫулхи программӑна пурнӑҫа кӗртни темиҫе вунӑ миллион тенкӗ накоплени пама тивӗҫлӗ, ҫакӑ вара Чӑваш АССР-ӗн бюджетне халӑх хуҫалӑхӗнчен кӗрекен доходсен тӗп никӗсӗ пулмалла.

Производство планӗ, унӑн пахалӑх тӗслӗхӗсем, финанс результачӗсем тата бюджет умӗнчи обязательствӑсем кашни предприяти, кашни организаци тӑрӑх пӗр сӑмахсӑрах пурнӑҫа кӗрсе пымалла.

Программӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн, накоплениие ӳстерессишӗн кӗрешесси тата хамӑр хуҫалӑхри материалсемпе укҫа-тенкӗ ресурсӗсене фронтпа тыл ыйтӑвӗсене тивӗҫтернӗ ҫӗре малалла мобилизацилесе пырасси пӗтӗм совет тата хуҫалӑх органӗсен хисеплӗ задачи пулса тӑрать.

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗ

Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджечӗ тата Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942, 1943 ҫулсенчи бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен

Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗ И. И. Золотников юлташ туна докладран

(*Ю л а ш к и*)

ОБОРОТРАН ИЛЕКЕН НАЛОГ

Чӑваш АССР-ӗн вырӑнти хуҫалӑхӗ аталанса пыни тата халӑхран налогсем енӗпе пухӑнакан доходсем ӳсни хамӑрӑн республика бюджетне пӗтӗм союзлӑ доходсенчен укҫа-тенкӗ уйӑрса парассине чакарма май пачӗ.

Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетӗнче оборотран илекен налог укҫи 31.735 пин тенкӗ чухлӗ пулмалла. Ҫавӑн пек доходсем 1940 ҫулхи бюджетра 57.816 пин тенкӗ, 1941 ҫулхи бюджетра 70.871 пин тенкӗ, 1942 ҫулта 40.500 пин тенкӗ, 1943 ҫулта 34.243 пин тенкӗ пулнӑ.

Ҫапла вара пирӗн бюджета оборотран илнӗ налогран кӗрекен укҫа-тенкӗ хисепӗ, оборотран илекен налога пирӗн республикӑра ҫултан-ҫул ытларах пухса пынӑ пулин те, 1940, 1941 ҫулсенчипе танлаштарсан, икӗ хут ытларах чакнӑ. 1940 ҫулта оборотран илекен налог пӗтӗм республика тӑрӑх 241 миллион тенкӗ пухӑннӑ пулсан, 1943 ҫулта 366 миллион тенкӗ пухӑннӑ.

Ку ӗнтӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ҫулсенче расходсен пысӑк пайне вырӑнти доходсемпе ситтни ҫинчен, оборотран кӗрекен налог укҫине, тӗпрен илсен, вӑрҫӑ ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме союзлӑ бюджета яни ҫинчен каласа парать.

Хӑшпӗр предприятисем оборотран илмелли налога шутланӑ чухне тӗрӗс мар йӗркесемпе усӑ курассӗ тата налог хумалли тупӑшсене пӗтӗмпех кӑтартмассӗ. Иртнӗ ҫулта хуҫалӑх организацийӗсен отчечӗсене тӗрӗслесе ревизи тунӑ хыҫҫӑн оборотран илекен налог хисепне 2.142,2 пин тенкӗ чухлӗ ӳстермелле пулчӗ. Вӑл шутра: Канашри аш-какай комбиначӗ тӑрӑх 61,8 пин тенкӗ, Етӗрнери спирт завочӗ тӑрӑх 746,5 пин тенкӗ, Шупашкарти эрех завочӗ тӑрӑх 707,5 пин тенкӗ, Куславккари Киров ячӗпе тӑракан артель тӑрӑх 68,6 пин тенкӗ, Етӗрнери Сталин ячӗпе тӑракан артель тӑрӑх 111,4 пин тенкӗ ӳстернӗ. Бюджета хывмалли тӳлевсене вӑхӑтра паманшӑн тӗрлӗ организацисенчен 148,5 пин тенкӗ пени шыраса илнӗ.

Предприятисемпе хуҫалӑх организацийӗсем отчетсем тӑвас ӗҫ ҫине ҫавӑн пек тирпейсӗр пӑхнине хирӗҫ тата бюджета хывмалли укҫана вӑхӑтра куҫарманнине хирӗҫ финанс органӗсен, ҫавӑн пекех тата ведомство руководителӗсен те татӑклӑн кӗрешмелле, ун пек ҫитменлӗхсене пӗтерме мӗнпур кирлӗ мерӑсене йышӑнмалла.

Оборотран илекен налог ССР Союзӗн государство бюджетӗнчи доходсен тӗп ҫӑлкуҫӗ пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та вӑл налога тӳлемелли тата отчетсем тӑратмалли дисциплинӑна ҫирӗппӗн тытса пырасси кашни хуҫалӑх руководителӗшӗн закон пулса тӑрать.

ХАЛӐХРАН ПУХӐНАКАН НАЛОГСЕМПЕ ТӲЛЕВСЕМ ТАТА КОЛХОЗСЕНЧЕН ИЛЕКЕН ПОДОХОДНАЙ НАЛОГ

Чӑваш АССР-ӗн бюджетне 1944 ҫулта колхозсенчен подоходнай налог шучӗпе илнӗ укҫа 6.958 пин тенкӗ чухлӗ кӗмелле. Кунсӑр пуҫне, халӑхран пухӑнакан подоходнай налог 3.086,2 пин тенкӗ, ялхуҫалӑх налогӗ 15.328,8 пин тенкӗ, военнай налог 6.153 пин тенкӗ тата вырӑнти налогсемпе тӳлевсем 18.711,2 пин тенкӗ пулмалла. Кӑҫал пӗтӗм союзри налогсем тӑрӑх пурӗ 242 миллион тенкӗ яхӑн тата вырӑнти налогсемпе тӳлевсем тӑрӑх 19 миллион тенкӗ яхӑн пухмалла.

1943 ҫулта доходсен планне Сӗнтӗрвӑрри, Красноармейски, Ишлей, Октябрьски, Вӑрмар тата Куславкка районӗсем, Шупашкар, Улатӑр тата Ҫӗмӗрле хулисем ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗ.

Вӑл тӗлӗшпе Хӗрлӗ Чутай, Йӗпреҫ, Ҫӗмӗрле, Тӑвай, Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав, Кувакино, Калинино тата Чкаловски районсем начар ӗҫленӗ.

Кая юлса пыракан районсен финанс ӗҫне тӗпренех лайӑхлатса, государство умӗнчи укҫа-тенкӗ обязательствисене тултарас тӗлӗшпе юлса пырассине халех пӗтермелле.

Налогсем ҫинчен калакан законсем тӑрӑх ҫар ҫыннисен ҫемьисемпе отечественнай вӑрҫӑ инвалидӗсене ҫӑмӑллӑхсем нумай пама палӑртнӑ. Вӑл ҫӑмӑллӑхсем иртнӗ ҫулта ялхуҫалӑх налогӗ тӑрӑх 43.275 пин тенкӗ, военнай налог тӑрӑх 60.000 пин тенкӗ чухлӗ пулнӑ, 1944 ҫулта вара 102.000 пин тенкӗ чухлӗ пулмалла.

Анчах та тӗрӗслесе тухнисенчен ҫакӑ курӑнать: ҫар ҫыннисен ҫемьисем ҫӑмӑллӑхсем илме тӑрассине законсӑр пӗтерме фактсем Хӗрлӗ Чутай, Ҫӗрпӳ, Канаш тата Шӑхасан районӗсенче пулнӑ.

Халӑхпа таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлекен финанс аппарачӗ налог законӗсене ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пыма тата налогсем пухас пӗтӗм ӗҫӗн пахалӑхне татӑклӑнах лайӑхлатма тивӗҫлӗ. Уйрӑмӑнах тӑван ҫӗршыва сыхлакансен ҫемьисене тата отечественнай вӑрҫӑ инвалидӗсене вӑхӑтра ҫӑмӑллӑхсем парасси ҫине хытӑ ҫавӑрӑнса пӑхмалла.

ГОСУДАРСТВО ЗАЕМӖСЕМ, УКҪАПА ЯПАЛАСЕН ЛОТЕРЕЙИСЕМ ТАТА ПЕРЕКЕТ КАССИНЕ ХЫВНӐ УКҪА-ТЕНКӖСЕМ

Чӑваш АССР-ӗн бюджетне государство заемӗсене сарнипе пухӑнакан укҫаран 26.383 пин тенкӗ пама палӑртнӑ.

Пирӗн республикӑра государствӑн иккӗмӗш военнай заемне ҫыранасси патриотла пысӑк ҫӗкленӳпе пулса иртрӗ. Чӑваш ӗҫҫыннисем вӑл заема 136,2 миллион тенкӗлӗх, укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейин билечӗсене 33.852 пин тенкӗлӗх ҫыранса илнӗ, перекет кассисене 11.052 пин тенкӗ, вӑл хисепрен 4.086 пин тенкине отечественнай аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хывнӑ.

Вӑрҫӑ ҫулӗсенче республикӑри халӑха выляв укҫисем тата процентсем 10.390 пин тенкӗ тӳленӗ. Вырӑнти советсем, перекет кассисен ӗҫӗсемпе ытларах интересленнӗ пулсан, асӑннӑ тӗслӗхсем татах та лайӑхрах пулма пултарнӑ.

Вырӑнти советсен перекет кассисен ӗҫпе, ирӗклӗн тата обязательнай йӗркепе страхлассине лайӑхлатас ыйтусемпе, государствӑшӑн кирлӗ ытти ӗҫсене тунӑ чухнехи пекех, тимлӗн ӗҫлемелле.

Перекет кассисен ӗҫне вӑйлатма, перекет кассисене ҫӗнӗ вкладчиксем тата темиҫе вуншар миллион тенкӗ укҫа-тенкӗ явӑҫтарма кирлӗ майсем пур районсенче те ҫителӗклӗ. Перекет кассисенчи работниксен хӑйсен ӗҫне, уйрӑмӑнах перекет кассисене укҫа хывнӑ тата государство заемӗсене тытакан ҫынсем хушшинче ӗҫлессине тӗпренех лайӑхлатмалла.

Март уйӑхӗнче государствӑн Иккӗмӗш Военнай заемӗшӗн укҫа тӳлесе татмалли срок вӗҫленет. Облигацисене заем ҫыраннӑ ҫынсене вӑхӑтра салатса пама халех тӗплӗн хатӗрленмелле. Комсодсем тата заем сарас тӗлӗшпе ӗҫлекен уполномоченнайсем хӑйсен ӗҫне тӗпрен лайӑхлатма тивӗҫлӗ.

Депутат юлташсем! 1944 ҫулхи финанс программи—государствӑшӑн питех те кирлӗ, ответлӑ задача пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та пирӗн республикӑри хуҫалӑх организацийӗсен тата гражданӑсен государство умӗнчи финанс обязательствисене пӗтӗмпех вӑхӑтра парса татма тивӗҫлӗ.

Финанс органӗсен укҫа-тенкӗ пухмалли плана пур енӗпе те тултармалла тӑвас пулать, райсоветсемпе хула совет тата ялсовет исполкомӗсен бюджета тупӑшсем мӗнле кӗрсе пынипе куллен тӗрӗслесе тӑмалла.

Чӑваш халӑхӗ патриотла пысӑк тухӑмпа ӗҫлесе пурӑнни, промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ малалла аталанса пыни, хамӑрӑн предприятисемпе учрежденисене тӗрӗс ӗҫлекен туни 1944 ҫулхи финанс программине иртерсе тултарма, ҫапла вара, хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва хӳтӗленӗ ҫӗре ытларах укҫа-тенкӗ пама пулӑшӗҫ.

III. Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджечӗн расхочӗсем

Чӑваш АССР Совнаркомӗ кунта пӑхса тухса ҫирӗплетме республика бюджечӗн расхочӗсене 163.076,1 пин тенкӗ чухлӗ палӑртнӑ.

Вӑл укҫа-тенкӗ ҫак ӗҫсене каять:

	Пин тенкӗпе шутласа
Пӗтӗм расходсем	163.076,1
Вӑл хисепрен:	
Промышленность	2.617,0
Ялхуҫалӑхӗ	3.436,0
Пурӑнмалли ҫуртйӗрсемпе коммуналлӑ хуҫалӑх	4.306,2
Социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисем	127.345,7
Управлени расхочӗсем	22.242,2
Ытти тӗрлӗ расходсем	1.301,0

СОЦИАЛЛӐ-КУЛЬТУРӐЛЛӐ МЕРОПРИЯТИСЕНЕ ПУРНӐҪА КӖРТМЕ УКҪА-ТЕНКӖ ПАРАССИ

Пӗтӗм бюджет хисепӗнчен социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисене пурнӑҫа кӗртме 78 процент пани партипе правительство ҫав кирлӗ ӗҫшӗн уйрӑмӑнах тимлӗн тӑрӑшнине кӑтартса парать. Бюджет тӑрӑх культурӑна малалла аталантарса пырас ӗҫе 127.345.700 тенкӗ хывма пӑхнӑ, ку хисеп 1943 ҫулхинчен 25,7 процент ытларах пулать.

Ҫав укҫа-тенкӗ уйрӑм отраслӗсем тӑрӑх ҫапла пайланать:

	пин тенкӗпе шутласа
Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ	90.439,0
Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫ	34.361,7
Физкультурӑпа спорт	200,0
Социальнай обеспечени	2.345,0

Бюджет тӑрӑх расходлама палӑртнӑ укҫа-тенкӗ хисепӗ халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ енӗпе уйрӑмӑнах нумай ӳсмелле. Пирӗн шкулсем, ача сачӗсем тата ҫутӗҫ учрежденийӗсем кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен 30.320 пин тенкӗ ытларах укҫа-тенкӗ илессӗ.

Шкулсенче вӗренекенсен хисепӗ пӗтӗмпе 167. 500 ҫын пулмалла. 1944 ҫулта 7 ҫула ҫитнӗ ачасене вӗренме илнӗ пирки шкулсенче вӗренекенсен хисепӗ 26.000 ҫын чухлӗ ӳсмелле.

Республикӑри 6 педучилищӗре вӗренекенсен хисепӗ вӑтамран 1944 ҫулхи сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 2.309 ҫын пулмалла. Ялхуҫалӑх техникумӗсенче — 4 техникумра вӗренекенсен хисепӗ 947 ҫын пулмалла. Ача ҫуртӗсен тата ача яслисен йышӗ те чылаях ӳсет.

Ҫапла вара ҫамрӑк ӑрӑва воспитани парас ӗҫе партипе правительство укҫа-тенкӗ питех те нумай хывассӗ. Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗсемпе ытти ведомствӑсен, вырӑнти советсен исполкомӗсен хисеплӗ задачи ҫак укҫа-тенкӗпе туллин те лайӑх усӑ курасси пулать.

Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе памалли укҫа-тенкӗ хисепӗ, учительсене ӗҫ укҫи ӳстерсе пана пирки, чылай ӳсет. Ку ӗнтӗ партипе правительство учительсемшӗн уйрӑмах тимлӗн тӑрӑшнине кӑтартса парать.

Ҫӗнӗрен шкулсем тунӑ ҫӗрте тата шкулсене юсанӑ ҫӗрте бюджетран 688 пин тенкӗ расходлама палӑртнӑ. Асӑннӑ ӗҫсене тума иртнӗ ҫулта та укҫа-тенкӗ чылай расходлама палӑртнӑ пулнӑ, анчах ҫав укҫа-тенкӗпе усӑ курман. Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн органӗсем тата райсовет исполкомӗсем ҫутӗҫ учрежденийӗсен ӗҫӗсене тӗпренех йӗркелеме тивӗҫлӗ. Финанс органӗсен вӗсем валли укҫа-тенкӗ ҫителӗклӗ парса тӑмалла.

Чӑваш республикин бюджечӗ тӑрӑх ӗҫҫыннисен сывлӑхне сыхланӑ ҫӗре 34.361,7 пин тенкӗ хывма палӑртнӑ. Хулари больницӑсенчи койкӑсен хисепӗ 1.211 ҫити ӳсмелле. 1941 ҫулта больницӑсенче 1055 койка ҫеҫ пулнӑ. Хуласенчи ача ҫуратмалли ҫуртсенче 1941 ҫулта 95 койка пулнӑ пулсан, 1944 ҫулта вӑтамран 137 койка пулмалла.

Ялти больницӑсенчи койкӑсен хисепӗ те ӳсет, вӗсем 185 пулмалла.

Хуласенчи яслисенче 1941 ҫулта 974 вырӑн пулнӑ пулсан, кӑҫал 2221 вырӑн пулмалла, ҫавӑн пекех ялсенчи яслисенче те вырӑнсен хисепӗ 125-рен 408 ҫити ӳсет. Хуласемпе ялсенчи яслисенче вырӑнсем ҫавӑн пек ӳссе пыни ача амӑшӗсене темиҫе пин ҫынна ӗҫе кӗме май парать.

Сывлӑха сыхлас ӗҫри ытти чылай мероприятисем енӗпе те укҫа-тенкӗ нумай расходлама палӑртнӑ. Ҫӑмахран, сывлӑха сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен учрежденисене юсанӑ ҫӗре 400 пин тенкӗ ытла пама пӑхнӑ. Сывлӑха Сыхлав Халӑх Комиссариачӗн органӗсем тата исполкомсем ҫав ӗҫсене тума пана укҫа-тенкӗпе иртнӗ ҫулта пӗтӗмпех усӑ курман. Ҫав вӑхӑтрах нумай больницӑсене тата ача яслисене вӑхӑта вӑраха ямасӑрах юсамалла пулнӑ.

Трахома чирне пӗтерессишӗн кӗрешес ӗҫе 2.899,2 пин тенкӗ пама пӑхнӑ. Иртнӗ ҫулта ҫав ӗҫе тума 2.606 пин тенкӗ пана пулнӑ. Вӑл хисепрен 2370 пин тенкипе ҫеҫ усӑ курнӑ.

Сывлӑха сыхлав Халӑх Комиссариачӗн трахомӑпа хирӗҫ кӗрешес ӗҫе туса пыма пана укҫа-тенкӗпе пӗтӗмӗшпех усӑ курмалла, ҫав ӗҫе кирлӗ пек организацилемелле.

Бюджетран халӑха ҫутта кӑларас, халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫсене, социаллӑ обеспечени тата физкультурӑпа спорт ӗҫӗсене туса пыма укҫа-тенкӗ нумай уйӑрса пани Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисен культурине малалла аталантарса пыма май парать.

ХАЛӐХ ХУҪАЛӐХНЕ УКҪА-ТЕНКӖ ПАРАССИ

1944 ҫулхи бюджетран халӑх хуҫалӑхне 11.223,2 пин тенкӗ пама палӑртса хунӑ. Пӗлтӗр халӑх хуҫалӑхне 15.375,1 пин тенкӗ пама палӑртса хунӑ пулнӑ, ҫак укҫаран 11.516 пин тенкине ӗҫе янӑ. Пӗлтӗр бюджетран панӑ укҫана вырӑнти промышленноҫпа ҫӑмӑл промышленность предприятийӗсем, коммунальнай ҫуртйӗр хуҫалӑхӗ, автотранспорт, ялхуҫалӑхӗ тата ҫыхӑну учрежденийӗсем сахал расходланӑ.

Промышленноҫпа хуҫалӑх наркомачӗсем тата управленийӗсем капитальнай строительствӑпа ремонт валли хӑйсен накоплениийӗсенчен 3.283,7 пин тенкӗ уйӑрса параҫҫӗ, оборотри укҫа-тенкӗ ҫитменнине саплама хӑйсен накоплениийӗсенчен 2.114,3 пин тенкӗ параҫҫӗ. Ҫапла вара, халӑх хуҫалӑхне бюджетран тата халӑх хуҫалӑхӗн хӑйӗн тупӑшӗсенчен 14.508,7 пин тенкӗ пама палӑртнӑ.

Халӑх Комиссариачӗсемпе вӗсен предприятийӗсен задачи — производство программине пӗтӗмпех тата лайӑх пурнӑҫласси, накоплени тӑвасси тата ӑна производствӑна сарас ӗҫе, ҫуртсемпе сооруженисене, оборудованисене юсас ӗҫе хывасси пулса тӑрать, ҫапла туса — продукци ытларах кӑларасси пулса тӑрать.

Государство интересӗсем хуҫалӑх органӗсен руководителӗсене капитальнай тата текущи ремонт тумалли плансене пурне те пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртме хушаҫҫӗ.

УПРАВЛЕНИ РАСХОЧӖСЕМ

Государство управленийӗн органӗсене бюджетран 22.242,2 пин тенкӗ пама палӑртса хунӑ. Управлени пирки укҫа расходлас тӗлӗшпе халӗ те законсене пӑснисем тата укҫа ытлашши расходланисем пулкалаҫҫӗ-ха. Штатсене вӑхӑтӗнче ҫыртармаҫҫӗ, государствӑн штат комиссийӗ ирӗк памасӑрах штатсене тата штатра кӑтартнӑ работниксен ӗҫ укҫисене ӳстереҫҫӗ.

Пӗлтӗр, служащисен пӗр пайне производствӑна куҫарнӑ май, штатри 150 единицӑна чакарнӑччӗ, ҫапла ҫулталӑкри ӗҫ укҫи 322,8 пин тенкӗ чакнӑччӗ. Ҫак тӗлӗшпе нумай ӗҫлемелле пулать-ха. Организацисен хӑйсен штачӗсене вырӑнти финанс органӗсенче майӑн 1-мӗшӗччен ҫыртармалла. Финанс органӗсен ҫав штатсене тӗплӗн тӗрӗслемелле, штат йӗркине пӑснине пӗрне те тӳрлетмесӗр хӑвармалла мар.

Халӑх Комиссариачӗсен тата ӗҫҫынни депутачӗсен совечӗсен государство укҫи-тенкине питӗ хытӑ перекетлемелле.

IV. Учет, отчетность тата финанс контролӗ

Депутат юлташсем! Фашистла Германие хирӗҫ пыракан вӑрҫӑ пирки тӗрлӗ материал та, укҫа-тенкӗ те питӗ нумай пӗтет. Апла пулин те, пирӗн государство тыл валли те укҫа нумай парать. Пирӗнни пек калама ҫук пысӑк хуҫалӑхра укҫа-тенке питӗ лайӑх шута илсе пырас пулать, кашни тенке упрас пулать, ӑна усӑллӑ расходлас пулать.

Ҫакна учетпа отчетноҫа тӗрӗс туса пырсан ҫеҫ пурнӑҫа кӗртме пулать. Учет ӗҫне тӗрӗс туса пыман пирки предприяти руководителӗ хӑйӗн хуҫалӑхне тӗрӗс пӗлме пултараймасть, унӑн суккӑр ҫын пек ӗҫлемелле пулать. Учет ӗҫне начар туса пыракан хуҫалӑх организацийӗсен балансӗсем ҫав организацисен ӗҫне тӗрӗс кӑтартмаҫҫӗ, вӗсем ӑна пӑсса кӑтартаҫҫӗ.

Учет ӗҫне начар туса пыни бухгалтерипе шут ӗҫӗнче ӗҫлекен работниксен квалификацийӗ ҫителӗксӗр пулнинчен те килет. Шут ӗҫӗнче ӗҫлекен работниксене нумайӗшне тепӗр хут вӗрентмелле. Анчах ҫак ӗҫе никам та тивӗҫлипе туса пымасть, ҫавӑн пек работниксене вӗрентме паракан укҫа-тенке ӗҫе ямаҫҫӗ.

1943 ҫулта СССР Наркомфинӗн контрольпе ревизи управленийӗн аппарачӗ Чӑваш республикинче 620 хут ревизи тунӑ. Ревизи туса, ҫӗнӗрен 547 пин тенкӗ доход илмеллине, 36 пин тенкӗ ытлашши укҫа-тенкӗ панине, бюджета 1.053 пин тенкӗ парса ҫитерменнине, администрацие управлени пирки 489,3 пин тенкӗ ытлашши расходланине, капитальнай строительство валли 44 пин тенкӗ законсӑр панине, 118,5 пин тенкӗ салатса тата вӑрласа пӗтернине палӑртнӑ.

Контроль ӗҫӗ районсенче те ҫителӗксӗр пырать. Ҫапла, акӑ, Первомайски районра пирӗн ревизи пӗр шкула тунӑ ҫӗрте пысӑк хуҫасӑрлӑх пулнине тата материалсене салатса пӗтернине палӑртнӑ (ҫак ӗҫ вӑл 1942 ҫулта пулнӑ).

Суту-илӳ системинче вӑрлани тата таварсене салатса пӗтерни нумай тӗл пулать-ха, тавар ҫӳретнӗ чухне те укҫа нумай тухать. Тавар ҫаврӑнӑшӗнчи тӑкаксене пӗр процент чакарсан та, пирӗн республикӑра оборот 340 миллион тенкӗ пулнӑ ҫӗрте 3.400 пин тенкӗ укҫа перекетленсе юлать.

Нумай предприятисенче хуҫасӑрла хӑтланнипе пула, продукци хӑйне ларакан хакӗ чакас вырӑнне ӳссе пырать. 1944 ҫулта мӗнпур промышленность предприятийӗсен тата республикӑри органсене пӑхӑнса тӑракан артельсен программи 90 миллион тенкӗ пулсан, продукцин хӑйне ларакан хакне пӗр процент ҫеҫ чакарсан та 900 пин тенкӗ укҫа перекетленсе юлать.

Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ хуҫасӑрлӑха хирӗҫ питӗ хытӑ кӗрешмелле. Ҫакна тума укҫа-тенкӗ контрольне тата тӗрлӗ учрежденисенчи контроле нумай лайӑхлатса ямалла. Контроль ӗҫне лайӑхлатсан ҫеҫ хуҫасӑрлӑха, укҫа-тенке вӑрланипе салатнине, таварсемпе материалсене производствӑпа суту-илӳре салатса пӗтернине пӗтерме пулать. Ҫапла туса пирӗн халӑх хуҫалӑхӗнче бюджета хывма ҫӗнӗрен темиҫе вунӑ миллион тенкӗ доход тупма пулать.

V. Республика бюджечӗ тата Чӑваш АССР-ӗнчи районсемпе хуласен бюджечӗ

Республикӑпа районсен тата Шупашкар, Улатӑр, Канаш хулисен бюджечӗсен пӗтӗм расход пайне Чӑваш АССР Совнаркомӗ 163.076,1 пин тенкӗ пулмалла туса ҫирӗплетнӗ.

Уйрӑмӑн илсе кӑтартсан, ҫав бюджетсен сумми ҫапла пулать:

	(пиншер тенкӗпе)
Республика бюджечӗ	36.292,3
Шупашкар хулин бюджечӗ	11.728,3
Улатӑр хулин бюджечӗ	6.019,3
Канаш хулин бюджечӗ	3.016,8
Районсен бюджечӗсем:	
1. Улатӑр	3.268,8
2. Элӗк	3.701,7
3. Вӑрнар	3.908,3
4. Йӗпреҫ	4.117,9
5. Ишлей	3.593,5
6. Калинино	3.017,0
7. Канаш	3.224,8
8. Куславкка	4.588,7
9. Комсомольски	3.377,8
10. Красноармейски	3.250,3
11. Хӗрлӗ Чутай	3.896,0
12. Кувакино	2.411,7
13. Сӗнтӗрвӑрри	3.747,7
14. Октябрьски	3.265,8
15. Первомайски	3.378,8
16. Пӑрачкав	3.711,9
17. Советски	3.462,1
18. Сӗнтӑр	3.920,7
19. Вӑрмар	4.581,9
20. Ҫӗрпӳ	6.307,3
21. Шупашкар	3.599,9
22. Чкаловски	3.638,9
23. Шӑмӑршӑ	3.076,4
24. Шӑхасан	3.808,3
25. Ҫӗмӗрле	5.914,0
26. Етӗрне	3.966,5
27. Елчӗк	4.407,9
28. Тӑвай	2.957,8

Депутат юлташсем! Чӑваш АССР бюджетне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртни пирӗн ҫӗршывӑн укҫа-тенкӗ хӑватлӑхне малалла ӳстерес ӗҫе чылай пулӑшни пулать.

Совет халӑхӗ, мӗнпур вӑя хурса ӗҫлесе, пирӗн ҫӗршыври производство вӑйӗсене ӳстерӗ, материалпа укҫа-тенкӗ запасӗсене мобилизацилӗ, юратнӑ ҫулпуҫ тата полководец — Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн маршалӗ аслӑ Сталин ертсе пынипе, тӑшмана тӗппипех аркатса тӑкас куна ҫывхартӗ. (**Алӑ ҫупаҫҫӗ**).

Перекет кассисен ӗҫне лайӑхлатмалла

Иртнӗ ҫулта республикӑри перекет кассисем, государство бюджетне 175 миллион тенкӗ ытла укҫа парса, ҫулталӑкри финанс планне 146,9 процент пурнӑҫларӗҫ.

1943 ҫулхи финанс планне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланипе, перекет кассин ӗҫӗ аван пулса пырать теме ҫук-ха, мӗншӗн тесессӗн, финанс планне уйрӑм енсемпе пурнӑҫламан пирки, 1943 ҫулхи бюджета 5 миллион тенке яхӑн укҫа парайман. Хӑшпӗр районсенче государствӑн иккӗмӗш военнай заемӗн укҫине те пухса пӗтермен. Тӗслӗхрен, Йӗпреҫ, Ҫӗрпӳ, Хӗрлӗ Чутай, Етӗрне, Тӑвай, Пӑрачкав районӗсем 3—4 пин тенкӗ государствӑн иккӗмӗш военнай заем укҫине пухман.

Иртнӗ ҫулта районри перекет кассисем вкладчиксен йышне ӳстерес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлерӗҫ, ку енӗпе ҫулталӑкри плана 62,9 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Канаш, Куславкка, Октябрьски, Хӗрлӗ Чутай, Йӗпреҫ тата ытти районсенче те вкладчиксен йышӗ ӳсес вырӑнне чакса пынӑ. Ҫакӑ ӗнтӗ перекет кассисен работникӗсем ҫак ӗҫ ҫине тивӗҫлипе ҫавӑрӑнса пӑхманнине кӑтартса парать.

Пуринчен ытла ялсенчи перекет кассисем начар ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Кунти работниксем хӑйсен ӗҫӗсем ҫине ҫиелтен пӑхаҫҫӗ. Ялти массӑсем хушшинче ку тӗлӗшпе агитациллӗ-ӑнлантарулла ӗҫе туса пымаҫҫӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех республикӑри хӑшпӗр ялсенчи перекет кассисем аван ӗҫленине те палӑртмалла. Тӗслӗхрен, Кувакино районӗнчи Тӑвалтӑ перекет касси 1943 ҫулта ҫине тӑрса ӗҫлесе, ҫӗнӗрен 200 ҫынна вкладчиксен йышне кӗртнӗ. Кун пек тӗслӗхсем татах та пур.

Ялти перекет кассисем ҫителӗклӗ ӗҫлеменни вӑл ҫак енӗпе ӗҫлекен руководительсем ответлӑха туйса ӗҫлеменнинчен те килет. Районти перекет кассисем ялти перекет кассисен ӗҫне лайӑхлатас енӗпе вӗсене кирлӗ пек пулӑшса пымаҫҫӗ.

Пирӗн республикӑри перекет кассисен ӗҫне лайӑхлатас тесе, ҫак уйӑхра мӗнпур перекет кассисен ӗҫне пӑхса тухаҫҫӗ. Ҫак ответлӑ ӗҫе финанс органӗсен работникӗсемпе профсоюз тата партипе комсомол работникӗсене те явӑҫтармалла.

Перекет кассисен ӗҫӗсем ҫинчен райсовет исполкомӗн ларӑвӗсенче сӳтсе-явса, вӗсен ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе конкретнай мерӑсем йышӑнмалла. Ҫавӑн пекех перекет кассисен ӗҫӗсем ҫинчен рабочисен, колхозниксен пухӑвӗсенче те сӳтсе-явмалла.

Март уйӑхӗнче ялсоветсенче ҫак енӗпе ӗҫлекен комиссисен составне пӑхса тухса, ӗҫлеме пултараймасӑр ҫынсем вырӑнне ӗҫлеме пултаракансене лартмалла. Ҫак ӗҫе ӑнӑҫлӑн туса иртерес тесен, ӗҫлекенсем хушшинче агитациллӗ-ӑнлантарулла ӗҫе те витӗмлӗн туса пымалла.

А. ПОКРОВСКИЙ.

Чӑваш АССР-чи перекет кассисемпе госкредит управленийӗн начальникӗ.

Ют ҫӗршывсенче

ССР СОЮЗӖН ПОСЛАННИКӖ ИСЛАНДИЕ ҪИТНӖ

ЛОНДОН, мартӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Рейкьявик хулине ССР Союзӗн посланникӗ Красильников ҫитнӗ. Хаҫат-журналсенче пичетлеме посланник ҫапла каланӑ: эпӗ Совет Союзӗпе Исланди хушшинче туслӑ ҫыхӑну пуҫланса кайтӑрччӗ тесе чунтан-чӗререн сӗнетӗп.

ХЭЛЛ ПРЕС-КОНФЕРЕНЦИРЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, мартӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, США-н государство секретарӗ Хэлл пресс-конференцире ҫапла каланӑ: Швеци королӗ Густав Финлянди правительствине чӗнсе калани (Густав унта Финляндие перемири тӗлӗшпе каласма совет условийӗсене йышӑнма сӗнет) президент Рузвельтпа Кордэлл Хэлл каланипе килӗшсе тӑрать пулмалла, Рузвельтпа Хэлл Финляндипе Германипе ҫыхӑну тытма пӑрахма сӗнни. Государство департаменчӗ, — тенӗ Хэлл, — пӗтӗм ыйтӑва пӑхса тухать, Финлянди Германипе тунӑ союз ҫине вӑл уйрӑмах хытӑ ҫавӑрӑнса пӑхать. Хэлл ҫапла каланӑ: Пӗрлешӳллӗ Штатсен Финляндипе ҫыхӑну тытма пӑрахасси ҫинчен пимӗн те калама пултараймастӑп. Ку ыйту вӑл хальхи ыйту мар, вӑл малашне тухса тӑрас ыйту пулса тӑрать, тенӗ.

АВИЛА КАМАЧО ЗАЯВЛЕНИЙӖ

МЕКСИКО, мартӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Мексикӑра пурӑнакан пулмасть Тито ҫарӗсене пулӑшса тӑма комитет тунӑ. Мексика республикин президенчӗ Авила Камачо ҫав комитет членӗсемпе каласса илнӗ. Вӑл вӗсене — комитет ӗҫӗсен планне ырлатӑп, тесе каланӑ. Вӑл комитета хӑй ҫинчен ятпа пулӑшса тӑма пулнӑ. Унтан вӑл ҫапла каланӑ: Тито ҫарӗсен ретне тӑрса нацистсемпе ҫапӑҫас текенсене эпӗ Югославие ҫитме мӗн май пур таран пулӑшӑп тенӗ.

РУМЫНСЕН ГУБЕРНАТОРӖ ЮТ ПАТШАЛӐХА ТУХСА ТАРНИ

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Шведсен «Дагенс Нюхетер» ятлӑ хаҫачӗн Лондонри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Анкара хулинчен ҫитнӗ хыпарсем тӑрӑх, Днестр шывӗн ку енчи ҫӗрсен Румыни губернаторӗ (Совет Союзӗн румынсемпе нимӗҫсем оккупациленӗ территорийӗ) самолет ҫине ларса, хӑй арӑмӗпе пӗрле ют патшалӑха тухса тарнӑ, хысна укҫине йӑлтах хӑйпе илсе тухса кайнӑ.

ВИШИ «ПРАВИТЕЛЬСТВИНЧЕ» ШАЛТИ ӖҪСЕН «МИНИСТРӖ» ПУЛНӐ ПЮШЕНЕ СУД ВӖЛЕРМЕЛЛЕ ТУНӐ

ЛОНДОН, мартӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Французсен Алжирти ҫар сучӗ Виши «правительствинче» шалти ӗҫсен «министрӗ» пулнӑ Пьер Пюшене вӗлермелле тунӑ. Суд приговорне хирӗҫ Пюше кассаци жалоби панӑ. Французсен Алжирти кассаци жалобисене пӑхакан ҫар сучӗ Пьер Пюшен жалобине йышӑнман.

ВИШИРИ РАДИОН СУЯ ХЫПАРНЕ СИРСЕ ЯНИ

ЛОНДОН, мартӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: ҫак кунсенче Вишири радио французсен хирӗҫ тӑракан ҫарӗн главнай штабӗн членӗсене тытса хупнӑ текен хыпар сарнӑ. Ӗнер французсен Лондонри делегацийӗ официально йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: радио сарнӑ хыпар суя, тенӗ.

БРАЗЗАВИЛЬ, мартӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Браззавильти радио Виши «правительстви»—французсен хирӗҫ тӑракан штабӗн членӗсене тытса хупнӑ, штабӑн планӗсене тытса илнӗ тесе сарнӑ суя хыпарсем пирки ҫапла калать: штаб хӑй ӗҫне ӑнӑҫлӑ туса тӑнине чи сывӑх вӑхӑтра кӑтартӗ. Ҫӗнӗ ӗҫсем Виши правителӗсен суя хыпарне пӗтӗмпех тӑрӑ шыв ҫине кӑларӗҫ,—тет Браззавильти радио.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЛЬВОВ ХУЛИНЕ ҪАРАТАҪҪӖ

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Шведсен «Морген-Тиднинген» ятлӑ хаҫачӗ ҫапла пӗлтерет: нимӗҫсем Львов хулинче пур заводсене те хупнӑ, вӗсен оборудованине Краков хулине илсе каяҫҫӗ. Чугун ҫулсем питӗ тулса ларнӑ. Львов хулинче кунсеренех нумай халӑха асаплантарса вӗлереҫҫӗ.

ИТАЛИРИ ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, мартӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Официально пӗлтернӗ тӑрӑх, Кассино хулине штурмланӑ чухне чи малта америкӑнецсен 5-мӗш армийӗнчи Новозеланди ҫарӗсем пынӑ. Вӗсем хула урлӑ ҫул татса тухнӑ та хулан кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ хӗррине ҫитнӗ. Новозеланди тата Инди чаҫӗсем, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, хула сывӑхӗнчи ҫӳллӗ вырӑнсене туртса илнӗ.

Анцио патӗнчи плацдарм районӗнче тӑшманӑн пысӑк мар вӑйӗсем виҫӗ хут чен атакӑланӑ. Атакӑсене пурне те сирсе янӑ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн ҫар объекчӗсене тапӑннӑ.

Иртнӗ каҫ союзниксен бомбардировщикӗсем тата Соффия хулинчи тавар станцийӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Ответлӑ редакторӑн заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, секретарьпе заместителӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00383 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л, Тираж 14.400 экз.